**Тĕрлĕ тĕслĕ акăшсем**

Ах, хитре суяççĕ-çке
Ашшĕсем те амăшсем:
Пурăнаççĕ-мĕн инçе
Тĕрлĕ тĕслĕ акăшсем.
Çавăн тĕрлĕ
Пухура
Пур тет хĕрлĕ,
Пур — хура,
Шурă, сарă,
Кĕп-кĕрен...
Тĕс пасарĕ —
Кӳлĕре.

Ах, хитре суяççĕ-çке
Хăш чухне ачисене.
Ачапча алли кĕскĕ
Теççĕ пуль ун пек чухне.
Ши! каяççĕ
Ачисем.
Пи! каяççĕ
Хĕрĕсем.
Çитĕнеççĕ
Пит патвар.
Çул инçеччĕ,
Алă пар!

Ах, кĕтеççĕ амăшсем
Ашшĕсем те килĕнче.

Тĕрлĕ тĕслĕ акăшсем,

Тен, пурах пуль çĕр çинче?

Пур та пулĕ

Мал енче

Ешĕл кӳлĕ —

Кĕленче....

Ярăнаççĕ

Акăшсем.

Таврăнмаççĕ

Ачисем.

Аптăраççĕ ашшĕсем,

Кулянаççĕ амăшсем.

*Дмитриев, А. Тĕрлĕ тĕслĕ акăшсем : [сăвă] / А. Дмитриев // Тăван Атăл. – 2010. – № 3. – С. 90.*